Ив. № 24-59
С(Чув)
Т

...а Кĕнеки

№ 12

М. Трубина пуçтарнă

# Ăваш йумахĕсем

Ретактăрĕ М. П. Петров

РЕСПУПЛĔКРИ
ЂĂВАШ КĔНЕКИ КĂЛАРАКАН УЙРĂМ
Шупашкар 1924.

# Умĕн калана́ са́мах.

Çак пĕҫĕк кĕнекере мĕн пурĕ та́хăр йумах. Çак йумахсем ҫа́вашшемпе пĕр ка́кран тухна́ Аçи çĕрĕнҫе пура́накан ытти тĕрĕксенĕн те пур. Çапла ĕнтĕ çак йумахсене ҫа́вашшем Аçи çĕрĕнҫе Ылттăн (Алттай) та́вĕсем таврашĕнҫе пура́нва́ ҫухнех туртса ка́ларна́ пулмалла. Ва́л темиçе пин çул та пулаŤ пулĕ ĕнтĕ.

Çав тери авалхи етем тĕттĕм етем пулна́, а́сĕ унăн аҫа а́сĕ пек пулна́. Ва́л çантала́кри пура́на́ç йĕркине те, етем пура́на́çĕ йепле пулса пынине те хайĕн айван а́сĕпе тĕпĕйĕрĕпе тавçа́рса шугласа илеймен. Çапла вара унăн шуха́шĕпе уйа́х çинҫе таса хĕр ĕмĕлки кура́наŤ пулаŤ, тĕпĕ кура́нми ха́руша́ тара́н шывра шыврисем, темĕн тĕрлĕ усалсем пура́наççĕ пулаŤ. Вĕсем çинҫен ва́л тĕрлĕ халапсем, тĕрлĕ калавсем туртса ка́ларна́.

Анҫах ĕмĕрсем иртнĕ çемĕн етем а́сĕ пуçĕ те ха́ватла́ланна́ çемĕн ха́ватла́ланса пына́. Ва́л пĕр пĕлӳпе тепĕр пĕлĕве çыпа́çтарса, çирĕплетсе, çиçтемлесе наукка́ ка́ларна́. Халĕ ĕнтĕ наукка́ çӳлтине те, айалтине те, инçетрине те, çыва́хрине те, кура́наканнинĕ те, кура́нманнине те пурне те витĕр пĕлет.

Çапла наука́ ка́тартна́ та́ра́х уйа́х çинҫи ĕмĕлке хĕр ĕмĕлки мар, тусенĕн ĕмĕлки, шывра та пуса́семпе ытти ҫĕр ҫунсенҫен пуçне ура́х нимĕн те çук, шыврисем те, ним усалтĕсел те çук. Çапла ĕнтĕ йумахсем вĕсем—йуптарусем, авалхи етем са́махĕсем çеç пулаççĕ.

Ретакси.

Аҫапăҫа Кĕнеки.

М... пуçтарнă

# ТĂВАШ ЙУМАХĔСЕМ

Ретактăрĕ М. П. Петров

РЕСПУПЛĔКРИ
ҪĂВАШ КĔНЕКИ КĂЛАРАКАН УЙРĂМ
Шупашкар 1924

Областлит № 228. Напеч. 3.000 экз.

Чебоксары, Типография Чувашгосиздата.

Йумах йупа тăррин̧ђе,
Халап хапха тăррин̧ђе.
Сикӗр ађсем кунтарах,
Тăнлăр мана лайăхрах.

# Ухмах ађа.

Ĕлĕк авал пĕр карђăкăн ађаш ывăл пулнă. Амăшĕ çав ађана ниç-та кăлармасăр, пĕр ĕç хушмасăр пӳртрех ађашласа усрань. Ађи 17 çулхи Тăрнаккай, пит айван пулнă.

Пĕрре амăшĕ каларĕ: Ађам унталла кунталла тухкаласа çӳреха. Тĕнђе çуттине кур, пурăнăç тутимасине пĕл. Çынна тĕл пулсан сăмах хушмасăр ан иртсе кай терĕ те, айван Тăрнаккайа тумлантарса кăларђа йађĕ. Ађи йалтан тухрĕ те, пусă тăрăх кайрĕ. Ăçта пăхнă унта ыраш калђи йешĕрет. Çуркуннехи сарă хĕвел хĕртсе пăхать. Унта кунта тăри сасси илтĕнет. Тăптăр кăвак пĕлĕт уççăн курăнса, çĕкленсе тăрать. Çавăн пек ђух ыраш пусси

тăрăх ансăр сукмакпа ç̆ўреме пит аван.

Хай пирĕн аҫаш Тăрнаккай ыраш калҫи пуссипе пыҫĕ пыҫĕ те, хура пусса тухрĕ. Хура пусăра ç̆ынсем хĕрсе ç̆уртырри акаç̆ç̆ĕ. Ç̆ак аҫа пĕр тулă акакан ç̆ын патне пыҫĕ те калаҭ:

— Хĕветĕр пиҫҫе, санăн туллу ана икĕ айăккипе пултăр, варринҫе ăн пултăр, ç̆ул пек такăр пултăр, тет.

Хĕветĕр пиҫҫĕш тăнласа тăҫĕ тăҫĕ те, суха сухалассине пăрахсах йаҫĕ илҫĕ ç̆ак аҫана та, пуç̆ларĕ ҫăпăрккапа ăшалантарма. Аҫа ç̆ухăра ç̆ухăра авкаланса ç̆еç̆ тăраҭ. Хĕветĕр пиҫҫе ҫăпăрккапа ҫăвăш та ҫăвăш тутараҭ. Хăй ç̆апмассерен ç̆апла калаҭ:

— Ак сана икĕ айкки пултăр! Ак тата варринҫи ан пултăр! Ах катăк! Епĕ пултăр тесе тарăхса ĕç̆летĕп, вăл, ухмах, варринҫе ан пултăр тет. Варринҫе ан пултăр парам епĕ сана! У-у-у! Ĕç̆лĕхсĕр! тет.

Хай аҫа макӑра макӑра амӑш патне килелле ҫупрӗ. Ҫухӑрса макӑрса киле пырса кӗҫӗ.

— Мӗн пулҫӗ, аҫам?! тет амӑшӗ. Аҫи ӗсӗклесе ӗсӗклесе калаҭ: Хӗвеҭӗр пиҫҫене епӗ санӑн туллу, ҫанӑн ану икӗ айӑкинҫе пултӑр, варинҫи ан пултӑр, терӗм те, вӑл мана ҫӑпӑрккапа хӗртсе йаҫӗ, тет. Хӑй: ӳ-ӳ-ӳ! тесе макӑраҭ.

Амӑшӗ калаҭ: ах, ухмах аҫам! тырӑ акакан ҫынна апла калаҫҫӗи ӑна? Тыррупуллу турттарса пӗтерейми пултӑр темелеҫҫӗ, тет.

Аҫи амӑшӗ вӗрентсе йанӑ пек калама тухса кайрӗ. Нырат пыраҭ ҫулпа, вилӗ турттарса пыракансене тӗл тулҫӗ. Вилӗ хыҫҫӑн ҫынсем куҫҫанса макӑрса пыраҫҫӗ. Ҫак аҫа ҫав ҫынсем патне пыҫӗ те: сирӗн виллӳ турттарса пӗтерейми пултӑр, терӗ.

Вилле ӑсатакансем: есӗ пире те вилме супатӑнҫке! тесе йарса илҫӗҫ те, хӗртме пуҫларӗҫ аҫана. Шӑла

çыртса çурăмран куплеттерeççĕ, аҫа аран аран хăтăлаҭ те, йĕре, йĕре киле таварăнаҭ.

— Мĕн пулҫĕха татах? тет амăшĕ. Ывăлĕ калаҭ: Вилĕ турттарса пыракансене, сирĕн виллӳ турттарса пĕтерейми пултăр! терĕм те, мана хĕртсе йаҫĕç, тет.

Амăшĕ калаҭ: ах, ухмах аҫам! Вилле турттарса пĕтерейми пултăр тесе кам калаҭ апла? Санăн çăкăр илее, вилле асăнса, пил ту тесе, тата тата тупăк патне пăрахас пулаҫҫĕ, тет.

Ывăлĕ çăкăр илет те, татах тухса кайаҭ.

Йал тăрĕх хĕпхĕрлĕ, çапçутă хĕртуйĕ çĕмĕрĕлсе пыраҭ. Хайхи айван Тăрнаккай туй тухса кайас уй хапхи патне пырса тăҫĕ те, çăкăрне таткала таткала, кашни урапине пил ту, пил ту, тесе перет. Хĕрĕнкĕ туй çыннисем ураписем çинҫен сиксе анҫĕç те, çак аҫана йарса илсе çăлкала пуçларĕç.

— Йе-е-е! Епӗр туй тӑватпӑр, ӗсӗ пире вилҫӗр тесе асӑнатӑниха! теҫҫӗ. Хӑйсем аҫана хӗпхӗрлӗ йун туса йаҫӗҫ. Килне ҫухра, ҫухра ҫупрӗ лешӗ.

Амӑшӗ ыйтат: татах мӗн пулҫӗха? тет.

— Туй иртсе кайнӑ ҫух, туй ҫынписене вилле асӑнса ҫӑкӑр татса пӑрахрӑм та, мана ҫавӑнштӑн ҫут вӗлеретҫӗҫ. Аран аран ҫӑлӑпса тартӑм, тет ывӑлӗ.

— Ах, ухмах, тет амӑшӗ. Хӗртуй ҫухне вилле асӑнса тӑраҫҫӗи? Туй иртсе кайнӑ ҫух, кӗслекупӑс каласа тӑраҫҫӗ вӗт, тет.

Хай аҫа кӗсле илет те, тухса кайат. Урамра ҫынсем ҫӑриҫари! ҫухраҫҫӗ. Вут тухнӑ, пӗтрӗмӗр! тесе кӑшкӑрнӑ сасӑ илтӗнет. Хупкура тӗтӗм урам варне сарӑлнӑ. Халӑх кӑткӑ пек унталла кунталла вӗркӗнет. Хӑшӗ пӗри йапаласем кӑлараҫҫӗ, хӑшӗ пӗри шыв йӑтаҫҫӗ. Ҫӑриҫари! Шӑнштан! илтӗнет. Хай пирӗн

аҫа та кӗслине ҫӗклесе вут патне ҫупрӗ. Ҫунса тӑракан ҫурт патне пыҫӗ те, кӗслине калама пуҫларӗ. Ҫынсем, ку аҫана курсанах, йарса тытрӗҫ, ҫилӗпӑшӗпе ҫут вута пӑрахаҫҫӗҫ, ҫапах пӑрахмарӗҫ.

— Мӗн ырра кӳштеретӗн есӗ? Епӗр пӗтетпӗр, есӗ кӗсле каласа тӑратӑн! Вут тухнӑшӑн хӗпӗртерӗни мӗн? тесе вӑрҫаҫҫӗ. Ҫынсем Тӑрнаккайа йӑлт ҫапса ватса киле йаҫӗҫ.

Амӑшӗ, ывӑлӗ макӑра макӑра таврӑннипе курсан, ҫупса пыҫӗ те, аҫашла аҫаипла каллех ыйтаҭ: Мӗн пулҫӗха татах? кам усал ҫынӗ тиврӗха ман аҫана? тет.

Аҫи макра макра калаҭ: Вут тухнӑ ҫӗрте кӗсле каласа тӑтӑм та, ҫынсем мана пит хытӑ хӗртрӗҫ, тет.

— Ах, аҫам, аҫам! тет амӑшӗ.
—Вут тухнӑ ҫӗрте кӗсле каласа тӑраҫҫӗи мӗн? Вут тухсан, вута сӳнтерме тӑрӑшас пулаҭ. Санӑн кӗсле калас вырӑнне, шыв пырса сапас пулаҫҫӗ, тет.

Хай аҫа пӗр витре шыв ҫӗклет те, тухса кайат.

Пӗр ҫын ҫырма хӗрринҫе сысна пуснӑ та, сыснине вутпа вӗтӗнтерсе тӑрат. Ку аҫа вӗтӗнсе выртакан сыснана шывпа ҫаш! тутарҫӗ. Сысна хуҫи ку аҫана йарса илҫӗ те: есӗ, ухмах, мӗн хӑтланатӑн! Пӗтертӗн вӗт сыснана! йӗпе сыснана йепле вӗтӗнтермелле ӗнтӗ! тет. Хай аҫана сыснана ҫыхнӑ кантрапа ислетет. Ислетрӗ, ислетрӗ те, сыснине ӗнтме тепӗр хут вут ҫӗртме тытӑнҫӗ. Аҫа макра макра киле кайрӗ.

Амӑшӗ ывӑлӗ макӑра макӑра тавӑрӑннӑран шалт аптӑранӑ.

— Татах мӗн пулҫӗха, кам тиврӗ? тет.

— Пӗр ҫын сыснана вутпа ӗнтеҫҫӗ те, епӗ вутне шывпа сапса сӱнтертӗм. Ҫавӑншӑнах мана кантрапа хӗртсе йаҫҫӗ, тет аҫи.

Амӑшӗ калат: ах, айван аҫам! Сыснана вӗтӗнтернӗ ҫух шыв сапаҫҫӗи ӑна? Санӑн сыснана вӗтӗнтерекене

сысниие кусарпа хырса пулăшас пулаҫҫĕ, тет.

Хай аҫа кусар илет те, сысна хырма тухса кайат.

Пĕр ҫын симĕс курăк ҫинҫе тутлă ыйхăпа ҫыврат. Ҫак пирĕн аҫа ҫав ҫывракан ҫын патне пыҫĕ те, уп ҫурăмне кусарпа хыра пуҫларĕ. Ҫывракан ҫын вăранҫĕ те, ыйхă тĕлĕшĕпе кăнкан пăхкаларĕ. Унҫҫен те пулмин, аҫана йарса илҫĕ те, ҫышкине шăла ҫыртса ҫăмăртаса ҫав аҫана ҫышкă тăхăнтара пуҫларĕ. Ҫурăмран та, ĕпсерен те лектерет. Леш айванăн тек йĕрсе сасси тытăннă пулсан та, йал тăрăшшĕпе уласа, йанăраса, киле пырса кĕҫĕ. Амăшĕ ним калама аптăранă: ырă—каҫ пулҫĕ! Каҫ пулман пулсан, ҫав Тăрнаккай таҫта та ҫитсе ҫапăнаҫҫĕ пулĕ. Тем тĕрлĕ чурнăҫ тутимасине те кураҫҫĕ пуҫ. Ҫавă ĕнтĕ пулат вырнаҫусăр сăмах, вырнаҫусăр ĕҫ.

---

## Амаçури.

I.

Мункун çитсен те, Çимĕк çитсен те, сар хĕр Праски тек йĕрет, вăрттăн улах çĕре кайаҫ те, хăйĕн вилнĕ амăшне асăна асăна тек куç шăлаҫ. Çынсен хĕрĕсем праçник çитсен, хĕпхĕрлĕ те, çапçутă тумланса çÿреççĕ. Праскийĕн праçник ҫух тăхăнмалăх кĕпи те çук; амаçури пĕр ҫипер кĕпе те çĕлеттермест. Çĕлес тесен, вăрçайса тăкаҫ. Хăй хĕрĕ Аҫтук валли пĕтĕм пиравăра пуçтараҫ. Çынсен хĕрĕсем выҫҫаççĕ, кулаççĕ, мăнтарăн Пăраскине амаçури урама та кăлармасҫ. Кирек хăçанах Праскине шурă куçне кăларса ĕçлеместĕн тесе вăрçаҫ, хăй хĕрне, Аҫтука пĕр ĕç те хушмасҫ. Ҫипер кĕпесем, пушмак ҫăлхасем тăхăнтарса çеç усраҫ. Аҫтук аван пулмасан та, амаçуришĕн аван. Праски темĕн ҫул ырă пулсан та, амаçурине йурапмасҫ.

Пӗрре Праскипе Алӳук улаха кайнӑ. Алӳук вӑйӑ выӆаса кӗнӆелине пӗрре те арламан. Праски тӑрӑшша арласа, çиппине киле пӗр çӑмха туса тавӑрӑннӑ. Хӗрсем иккӗшӗ те киле тавӑрӑнсан, Праскине шуркуç кӑларса вӑрçа пуçларӗ. Ним айӑпсӑрах, ним каласа вӑрçма çук çӗртенех: Кӳрха кунта çиппӳне! терӗ. Праски пӗр шарламасӑр çӑмхине тыттарӆӗ.

— Ихӳ! терӗ те, çӗре лаӆ, сурӆӗ. —Çавӑн пек ӆипер мар çип кам арлаӳ пуӆ. Пӗрре те тикӗс мар, тӗвӗллӗ, шакӑллӑ пӗртте йака мар! тесе вӑрçа пуçларӗ. Унӆӗн те пулмарӗ, амаçури Праски çӑмхине тула кӑларса вӑнт! тутӑрӆӗ. Çӑмха кӑлтӑр, кӑлтӑр туса вӑрман сукмаккипе кусса кайрӗ. Праски çӑмхи хыççӑн тытас тесе ӆупса пыраӳ. Çӑмхи кусса пыӆӗ пыӆӗ те, пӗр шӑтӑка кӗрех кайрӗ. Праски те çӑмхи хыççӑн анса кайрӗ. Шӑтӑкра пӗр хӑрушӑ, ватӑ карӆӑк лара параӳ. Ку-

çӗ ҫармак, шăлӗ тимӗр, çӳçӗ ука.
Праскине курҫӗ те ыйтаҫ:

— Мӗн кирлӗ сана, хӗрӗм, йепле киле пӗлтӗн есӗ кунта? тет.

— Çăмха хыççӗн килтӗм епӗ, тет Праски.

— Апла пулсан йураҫ. Манăн пуçа тураха, тет карҫăк.

Праски, сăхманне хывса, карҫăк пуçне турама ларҫӗ. Карҫăк хăй пуçне турама ылттăн тура тупса паҫӗ те, калаҫ: Аҫам, пӗр çӳç пӗрҫине те ан тат вара, тет.

— Йураҫ, тет Праски.

Праски карҫăк пуçне турама тытăнҫӗ. Ука çӳç тыткаламалла та мар: хуçкаланса, ванкаланса çеç тăраҫ. Праски хуллен хуллен çапах та пӗр çӳç пӗрҫи татмасăр карҫăк пуçне тураса пӗтерҫӗ.

— Йентӗ мана шыва кӳртха, тет карҫăк.

— Йурӗ, тет Праски.

Праски вăрвар шыв ăшăтма вут хутса йăҫӗ те, шывне ăшăтса, ăшă

пӳрт туса, карҫӑка шыва кӳртрӗ. Ҫипер типтерлесе, ӳтне шур алшӑлипе шӑлса типӗтсе, таса кӗпе тӑхӑнтарҫӗ.

— Тем пекех пысӑк спаҫҫипӑ сана, аҫам! тет карҫӑк. Хӑй кӗтесре тӑракан арҫана илҫӗ те, хӗре парать.

— Мана пайан пӑхнӑшӑн есӗ ҫак арҫана илсе кай. Хам ҫуратса ӳстернӗ хӗр пек есӗ мана пӑхрӑн. Анҫах асту, аҫам, арҫуна киле ҫитмесӗр уҫҫа ан пӑх, тет.

Праски арҫана илет те, киле кайать. Карҫӑк сӑмахне кӗрӗшше, Праски арҫана киле ҫитмесӗр уҫҫа пӑхмарӗ. Килте уҫҫа пӑхсан тӗлӗнсех кайрӗ. Ак, телей! Мӗнмӗн ҫук ку арҫара! Тухйа, тенкӗллӗ мӑйҫыххи, ҫӗнтӗрлӗ ҫурӑм шерпи, хурткуҫҫиллӗ тевеҫӗ, пурҫӑн кӗпесем, ҫӗрҫитисем... Тем те пур. Йӑлтӑр йалтӑр! Ҫапҫут! Амаҫурийӗн, Праски йапалисене курсан, куҫӗпуҫӗ ҫаларса кайрӗ. Пур те тӗлӗнсе хытсах кайрӗҫ. Пӗҫҫе шарт ҫапаҫҫӗ. Шалт

тӧлӗнмелле! Амаçурипе Алђтукӗ Праскине: ăçтан тупрăн та, ăçтан тупрăн? тесе апрата пуçларӗç. Праски мӗн пулнине пӗтӗмпе каласа пађӗ. Амаçури хăй ăшӗнђе шухăшлаҭ: ыран хам Алђтука йарамха, тет.

2.

Тепӗр кун амаçури хăй хӗрне, улахран таварăнсан, йурийех вăрçнă пек туса, хыттăн калаҭ:

— Кӳрха кунта çиппуне, тет. Алђтук çăмхине амăшне тыттарђӗ. Амăшӗ: пху! çавăн пек ђипер мар кам арлаҭ, тесе сурса çăмхине ывăтса йађӗ. Вăрттăн хăй хӗрне ађаштăн калаҭ: Праски пек, есӗ те çăмха хыççăн кайса, мул тупса килха тет.

Алђтук çăмхи те, Праски çăмхи пекех кăлтăр кăлтăр кусса кайрӗ. Алђтук та çăмха хыççăн ђупрӗ. Çăмха кусса пыђӗ пыђӗ те, çак шăтăка кӗрех кайрӗ. Шăтăкра ӗперхи тимӗр шăллă карђăк лара параҭ.

— Мĕн кирлĕ сана, хĕрĕм, йепле киле пĕлтĕн есĕ кунта? тесе ыйтрĕ хай карҙăк.

— Çăмха хыççăн килтĕм епĕ, тет Алҙук.

— Апла пулсан йурĕ. Манăн пуçа тураха, тет карҙăк.

Алҙукăн арҙа илсе киле кайас шухăш çеç, çавăнпа карҙăк пуçне пит васкаса тураҫ ку. Ука çӳç тытмассерен хуçăлаҫ, татăлаҫ. Алҙук темĕн ҙухлĕ çӳç ватса тăпăлтарса пĕтерҙĕ те, карҙăк ан куртăр тесе, ваннă çӳç пĕрҙине хĕве ҙикрĕ.

Пуç тураса пĕтерсен, карҙăк калаҫ: ĕнтĕ мана шыва кӳрҫха, тет.

— Йурĕ, тет Алҙук. Хăй çав карҙăк арҙине лектерсе кайас шухăшпа çеç тăраҫ. Карҙăка шыва кӳртме шыв ăшăтма шухăшламасҫ те, сивĕ шывпах, сивĕ пӳртрех карҙăка пĕр типтерсĕрех шыва кӳртрĕ.

— Аҙам, пуç та турарăн, шыва та кӳртрĕн, çавăншăн есĕ çав кĕтесре ларакан арҙана илсе кай. Киле

çитмесĕр ан уççа пăх вара, терĕ карçăк.

Алçук арçана илçĕ те, киле вĕçтерçĕ. Шăтăкран тухнă тухман арçине уççа пăхрĕ. Ак, тамаша! арçа хуппине уççа йарсанах симĕскăвак çĕлен калта йăшăлтатса тухрĕ. Хисепсĕр нумай. Авкаланса, хуçкаланса хĕре йавăнса илçĕç те, çавăнтах çиме пуçларĕç.

Амăшĕ хăй хĕрне тем пек кĕтет. Урама туха туха пăхат. Мул пит нумай йăтса килет пулĕ тесе, вăрмана хирĕç тухат. Вăрман сукмаккипе пырат пырат, хĕрĕ килни курăнмаст. Малалла утат. Кайсан кайсан, шăтăк патне çитрĕ. Пăхат — шăтăк патĕнçе пĕр арçа ўпне питне уçăлса выртат. Арçа патĕнçе Алçук шăммине çĕлен калтасем ĕмсе выртаççĕ.

## Пукане.

Çулпа пўрне пек пĕçĕкçĕ çеç пукане утса пырат. Вĕрçĕнĕ шаппурă

кёпепе, çапçута тухйапа, сапсарă çăпатапа. Шура кёпи вăрвăр вёçет, çута тухйи шăнкăршăнкăр тăвать, çёнё çăпати пусмассерен шатăршатăр, тет. Çак хитре пукане çулпа пырать пырать, çерçийе тёл пулать.

— Ăçта кайатăн, пукане тус? тет çерçи.

— Каҫҫă шырама кайатăп, тет пукане.

— Каҫҫă, терёп хам пулам, тет çерçи.

— Пуласси пулăн та, çерçи, ташшу йурру мёнлеши санăн? тет ку.

Çерçи йурлама, ташлама пуçларё. Çўçне пуçне тăратса пёрре иккё сиккелесе те илҫё. Хай ҫилик, ҫилик тесе йурлать.

Пукане тата ыйтать: пурнăç йёрки йепле санăн? тет.

Çерçи калать: Ăçта тыр пур, унта çийетёп, ăçта улăм пур, унта ҫаваланатăп. Какай çийес килсен, хурткăпшанкă шыратăп, тет.

Пукане шухăшласа тăҫё тăҫё те, çерçине калать: Айух епё сана каҫ-

ҫа пымастӑп: санӑн йурру та пит кӗске, сӑвӑллӑ мар, тата улӑм ҫинҫе ҫавалансан, манӑн шурӑ кӗпе тусанланат, тет.

Ҫерҫи пӗр ҫӗнмесӗр те хурланса, те хурланмасӑр вӗҫҫе кайрӗ.

Пукане хӑй ҫулӗпе малалла утрӗ. Пырат пырат, ула курака тӗл пулат.

Курак калат: ӑҫта кайатӑн, пукане тус? тет.

— Каҫҫӑ шырама кайатӑп тет пукане.

— Каҫҫӑ, терӗш хам пулам, тет курак.

— Пуласси пулӑн та, тет пукане санӑн ташшуйурру йепле? тет.

Курак: крак-ак! крак-ак! тесе кӑшкӑрса транк транк сиккелесе илҫӗ. Ташшийурри ҫав пулҫӗ.

Пукане тата ыйтат: пурнӑҫ йӗрки йепле санӑн тет.

Курак калат: Ӑҫта тирӗс пур, унта ҫавалanатӑп, ӑҫта ҫӳпҫап пур, унта апат шыратӑп, тет.

Пукане каллех шухăшласа тађетађĕ те, ула курака калаŧ: Айух! сана кађђа пымастăп. Санăн йурруташшу та илемсĕр, тата çŭнçап çинђе çŭресен, манăн çĕнĕ çăпата вараланаŧ, тет.

Ку сăмахсене илтсен, улакурак та кăраклата кăраклата вĕççе кайрĕ.

Пукане малаллах утрĕха. Утаŧ утаŧ, пуканене хирĕç пĕр шăши хăлхисене тăратса пыраŧ.

— Ăçталла кайатăн пукане тус? тет шăши.

— Кађђă шырама кайатăп, тет лешĕ.

— Кађђă, терĕш хăм пулам, тет шăши.

— Пуласси пулăн та, санăн йуррутăшу йеппле? тет пукане.

Шăши купăс сĕрнĕ пек çинçе сассипе йурлама пуçларĕ: Ђиђи, ђикки ђикки ђии, ђи! тет. Хăй пĕђĕкçĕскер вĕтĕ урисемпе йăпăртаттарса таплаcа та илђĕ. Пукане пăхса тĕлĕнсе хытсах кайрĕ. Хăй ça-

ҫах шăширен: пурнăҫ йĕрки йепле санăн тата? тесе ыйтаҫ.

Шăши хăй пурнăҫĕ ҫинҫен калама тытăнҫĕ:

— Ҫиҫи, ҫиҫи пуҫламан пӳлмене хам пуҫлап, пуҫламан ҫу ҫĕрессине хам пуҫлап.

Пĕр алли ман пыл ҫинҫе, тепĕр алли ҫу ҫинҫе. Мĕн ҫийес терĕн, ҫавна ҫи. Епĕ ампарта икĕ пӳлме хушшинҫе пурнатăп. Манăн пурнăҫ таптаса, йапйака. Аҫа, курсан ытарайман, тет.

Шăши ҫылайҫен хăй пурнăҫне мухтаса йурларĕ. Хăй хăрах аллипе илемлĕн курнашшăн сухаллисене йакаткаласа тăраҫ.

Каҫҫăсене тиркесен, пукане хăйхи ҫак шăшийе каҫҫа кайма шут тытрĕ. Хăй ăшĕнҫе кăшт шухăшласа тăнă пек турĕ те, шăшине каларĕ: Йурĕ еппин, сана каҫҫа пырас пулĕ, терĕ.

Шăшипе пукане аларан ал тытса килне кайрĕҫ. Килпеҫуртне пăх-

са ҫӳресен, туй тăвас терĕҫ. Шăши хăй тусĕсене пурне те ҫĕнҫĕ. Туйа пур те ҫасах ҫитрĕҫ. Кунта такам та пур: арлан, шăшийус (йапйакаскер), тата нӳхрепри сăра пиҫки хыҫĕнҫе пурнакан йĕкехӳре. Пур те хыпаланса ĕштеленсе ҫӳреҫҫĕ. Шăшипе пукане килте мĕн ĕҫмеҫиме пур пĕтĕмпе кăларса лартрĕҫ. Ĕҫĕр, ҫийĕр, хăнасем! Асăнăр пуйан шăши туйне терĕҫ.

Хăнасем ĕҫрĕҫ, ҫирĕҫ те, ӳсĕрĕлҫĕҫ. Кĕсле купăс каласа йара паҫĕҫ ташша. Ҫĕр ҫаван арлан тусан кăларса кутăн, кутăн ҫакса ташлаť. Пур те пит ташларĕҫ. Ташласан ташласан, ывăнҫĕҫ пулас, ҫарĕнҫĕҫ. Пуканене ташлатас тийе пуҫларĕҫ. Пукане сиксе тăҫĕ те, хăйпе умсанса, хăйне хăй тăрăххăн пăхса ташлама пуҫларĕ. Калама та ҫук хитре ташлаť. Тенкисене шăнкăртаттарса шуса ҫеҫ ҫӳрет. Пĕтĕм туй халăхĕ тĕлĕнсе кайса ала ҫупаҫҫĕ. Мĕн ҫухлĕ пукане ташларĕ, ҫавăн ҫухлĕ пу-

çӗ çӳлелле çӗкленет. Ӗнтӗ çӗре те пăхми пулҫӗ. Хăйне хăй тăрăххăн çеç пăхаҭ. Çапла ташласа çӳренӗ ҫухне, пукане ăнсăртран сăра катки çиве кӗнӗ ӳкнӗ. Шурă кӗпи вараланҫӗ. Пукане хайхисене пăрахса кӗпине çума шыв хӗрне каяҭ. Шыв хӗрринҫе ку пукане пыҫҫăка ларнă тăнă. Тухас тесе тапаланаҭ, тухаймасҭ. Çăлкаланнă çемӗн шаларан шала лаҫакана кӗрсе каяҭ. Кам та пулин курса туртса кăлармӗши тесе, унталла кунталла пăхкалаҭ. Йăмра тăррине хай çерçи лара параҭ. Ҫӗлик! ҫӗлик тесе пӗр шухăшшăр йурлаҭ. Айалта пыҫҫăк çинҫе пуканене курах кайрӗ.

— Мӗн тăватăн есӗ кунта, пукане тус? тесе ыйтрӗ çерçи йурласа ларнă хушăран.

— Кӗпе çума килтӗм те, пыҫҫăка лартăм. Туртса кăларха мана, теҭ пукане.

— Ҫилик, ҫилик, айук! Епӗ сана пыҫҫăкран туртса кăларса çӳреме

ухмах мар: есӗ ху мана тиркесе каҫҫа пымарӑн, терӗ ҫерҫи. Кайӑк йурлакаласа ларҫӗ те, урӑх ҫӗрелле вӗӗр! вӗҫҫе кайрӗ. Пукане пӑхкала йулҫӗ. Хӑй пыҫҫӑк ӑшнелле кӗнӗ-ҫем кӗрет. Кам та пулин иртсе ҫӳрекен тӗл пулмӗши тесе, унталла кунталла хурлӑхлӑ пӑхкалаҭ.

Ак хайхи улакурак лапаттарса вӗҫҫе пыраҭ.

— Кра-а! Кра-а! Мӗн тӑватӑн есӗ кунта, пукане тус? тесе ыйтаҭ улакурак. Пукане пыҫҫӑк ҫинче тапаланаҭ. Хӑй макӑрас пек пулнӑ. Улакурака тилмӗрсе калаҭ.

— Пыҫҫӑка лартӑмҫке епӗ, туртса кӑлархӑ мана, тет.

— Мӗн сана туртса кӑларасси пур? Ху мана тиркерӗн, каҫҫа пымарӑн, терӗ улакурак. Ҫунаттисене лӑппилаппи саркаларӗ те, ӑшӑ тирӗс салатма вӗҫҫе кайрӗ.

Пукане каллех пӗҫҫенех тӑрса йулҫӗ. Пӑхкалаҭ пӑхкалаҭ, никам та ҫук. Хӑй лаҫакана путнӑҫем путаҭ.

Кăкăр таран кĕрсе ларҫĕ ĕнтĕ. Хăлхине тăратса ҫын иртсе кайнине итлет. Шăпăрт. Пĕр сасăҫĕвĕ те ҫук. Никам та иртсе ҫӳремест. Тĕттĕм пулҫа килет. Пукане ҫун хавалĕпе тухасшăн тапаланаť — тухаймасť. Тапалана тапалана, мăй таран лăп кĕрсе ларҫĕ. Кăшт тăрсан, ӳсĕр ҫын сăввисем илтĕне пуҫларĕҫ. Хайхи туйа пынă шăши тусĕсем хăнаран саланаҫҫĕ пулмалла. Пукане ҫавна сиссен ҫухăрма пуҫларĕ. Хĕрĕнкĕрех хăнасем хыпаланса ҫупса пыҫĕҫ те. пуканене кăларма тытăнҫĕҫ. Пур те пуканене икĕ хулинҫен тытрĕҫ те, шăла ҫыртса, ура тапса туртаҫҫĕ. Туртрĕҫ, туртрĕҫ кăлараймарĕҫ икĕ хулне татрĕҫ. Хулĕсем тухса кайсан, тата пуҫĕнҫен тытса турта пуҫларĕҫ. Апша пиҫҫе, пĕтĕм вăйран туртаҫҫĕ, ҫук, тухмасť. Туртрĕҫ, туртрĕҫ те, пуканен пуҫĕ те татăлса кайрĕ. Пĕтрĕ.

## Ђейе тилӗ.

Пӗр старик вӑрмантан тилле ђӗрӗллех тытса таварӑннӑ та, карђӑкне калаҭ: Карђӑк, манӑн кивӗ ҫӗлӗке кӑмакана пӑрахса ҫунтарса йар, тет. Епӗ ҫӗлӗклӗх пит аван тир тупса килтӗм, пӑхха, терӗ те, тилле михӗ ӑшӗнђен кӑларса урайне йађӗ.

Карђӑкӗ вут хутса ҭӑнӑ пулнӑ. Старик ҫӗлӗкне илђӗ те, кӑмакана пӑтлаттарђӗ.

Старик калаҭ: Тилӗ тус, ӗнтӗ епӗ сана ҫӗлӗк тума пусатӑп, вилиђђен есӗ пире пӗрре ташласа кӑтартха, тет.

Старик хӑй ҫӗҫӗ хӑйрама пуҫларӗ. Мӗскӗн тилӗ унталла кунталла хурлӑххӑ пӑхкалаҭ. Мӑнтарӑн ђунӗ! Пит вилес килмест пулӗ! Тилӗ ђӳређерен вӑрттӑн вӑрман йенелле пӑхаҭ.

Старик ҫӗҫӗ хӑйраса пӗтерђӗ те, тилле калаҭ: ну, тилӗ тус, ташла, ташламасан халех пусатӑп, тет

Тилĕ калаҭ: Ташласси ташлатăп та епĕ, манăн ташлама хитре кĕпе çук çав, тет.

Карҫăкпа старик ку тилле хитре кĕпе тупса тăхăнтараççĕ. Тилли ташлама хатĕрленсе, ура çине тăҫĕ. Хăйне хăй тăрăххăн пăхкаласа тăраҭ.

Старик калаҭ: Мĕншĕн ташламастăн тата, тилĕ тус? тет.

— Ташласса ташлăттăм та, тет тилли, манăн пуçра хушпу çукçке, тет.

Карҫăкпа старик тилле хушпу та тупса тăхăнтарҫĕç.

Тилли хушпу тăхăнсан та, çапах ташламасҭха. Хăйне хăй тата тăрăххăн пăхаҭ.

Карҫăкпа старик иккĕшĕ те: ташла ĕнтĕ, тилĕ тус, ташла мĕншĕн ташламастăн? теççĕ.

Тилли калаҭ: ташласси ташлатăп та, манăн тенкĕллĕ măйçыххи çукçке, тет.

Карҫăкпа старик тенкĕллĕ мăйҫыххи те параҫҫĕ. Тилли ҫапах ташламасть: манăн ара шŭлкеме ҫукха тата, тет. Старикпе карҫăк тилĕ мĕн ыйтнине пурне те туиса паҫĕҫ те, тилĕ кăпт уҫăлса кулкалама пуҫларĕ. Старик кĕсле калама тытăнҫĕ, тилĕ хуллен, хуллен ташлама пуҫларĕ. Ҫăмăланнăҫемĕн ҫăмăл ташлать. Хушпу тенкисем, мăйҫыххи тенкисем шăнкăршанкăр туса ҫеҫ тăраҫҫĕ. Карҫăкĕ ҫунакан кăмакине вăрахсах алă ҫупа пуҫларĕ. Туй пек!

— Ҫăмăлтарах ташла, тилĕ тус, ну, йара пар! тет старик. Хăй те алхасса кайнă, сиксе тăрса тилĕпе ташласси ҫеҫ. Тилли тем тĕрлĕ, илемлĕ, ҫăмăллăн ташлать. Старикпе карҫăк тĕлĕнсе хытсах кайрĕҫ. Тилĕ ташласа ҫŭрерĕ, ҫŭрерĕ те, хăйне ăшă пулнă пек пулса калать:

Алăк уҫҫи уҫăрах!

Кантăк хуппи уҫăрах! тет.

Хай карҫăк вăрвар алăкспе кантăкĕсене уҫҫа пăрахрĕ. Тилĕ хĕпĕрте-

се кула кула ташласа çӳрет. Тилĕ ташласа çӳрерĕ çӳрерĕ те, алăкран вĕлт тухса шурĕ. Карçăкпа старик çăвара кара йулçĕç. Пĕтĕм мул та, çĕлĕк те пĕтрĕ. Тилли те, каслашшĕ, пит çейе çав!

---

## Уйăх çинçи хĕр.

Уйăх тулса çитсен, тăптăр пĕлĕт çинçе кулса тăнă пек курăнат. Çавăн пек çух уйăх çине авантарах сăнаса пăхăрха. Уйăх çинçе пĕр çын мĕлки курăнат пек туйăнмасти? Авантарах сăнаса пăхсан, çăнахах пĕр çын мĕлки курăнат. Çав мĕлкĕ кĕвентепе икĕ витре çакса тăрат. Итлĕрха. Çав уйăх çинçе тăракан çын мĕлки çинçен ĕлĕк авалхи çăваш халапĕ пур. Çав халапа сире каласа парамха.

Такçанах, ĕлĕк авал пĕр хытă çĕрелле усал тухатмăш пурăннă. Çав тухатмăшăн çырла пек çипер хăй çуратман сарă хĕр пулнă. Тухатмăш çак хĕре пит илемлĕ пулнăшăн ку-

райман. Мĕнле те пулин çак амаçури хĕре пĕтерес тесе шухăшланă. Кунĕнçĕрĕн амаçури çак хĕре вăрçнă, кунĕнçĕрĕн ĕç хушша асаплантарнă. Сар хĕр çапах илемлĕ те, сасси çапах кайăк сасси пек, кулни те хĕвел ăшши пек. Пур те йуратаççĕ çав хĕре. Пĕр амаçури çеç йуратмасть.

Пĕрре çак амаçури таçтан, çăва патĕнчен, тылă çине утланса тавăрăнчĕ. Çурçĕр çитнĕ. Чипер сывăракан хĕре тăратрĕ те, калать:

— Кайха шыв хĕрне. Шыв ăсса кил, тин кунĕ шыв ĕçес килет манăн, тет. Хĕр тăчĕ те шыв ăсма кайрĕ. Тухатмăш хăй ăшĕнче шухăшлать: лекрĕ ĕнтĕ ку сар пике; шыв хĕрринчи тухатмăшшем пĕтереççĕ ĕнтĕ кăна, тет. Çав чухха ăна. Хăй чиперрипе тек çиççе çурет-чĕ, пĕтрĕ ĕнтĕ! шăпи тулчĕ! тет.

Шыв хĕрринче чăнахах та тĕрлĕ çĕртен тухатмăшшем пуçтарăнна. Вĕсем тинĕс урлă, Атăл урлă мĕлке-

сем çине утланса кaçнă. Вăрман урлă, сăрт урлă тылăсем çине утланса килнĕ. Кунта пайан пĕтĕм тĕнђери хăватлă тухатмăшшем пуçтарăннă. Хайсем пăхма хăрушă: йўле пилĕкĕн, çўçне пуçне салатнă, тĕлсĕр шăлĕсене кăтартса тăраççĕ. Сысна пек те çухăраççĕ, йытă пек те улаççĕ, шапа пек те макаклатаççĕ.

Амаçури хĕрĕ шыв кўме пыраť. Тухатмăшшем пуçтарăннă тесе, ку хĕр шухăшламасť те. Çурçĕр çитнĕ пулин те, пĕрре те хăрамалла мар: уйăх çути кăнтăрлахи пек çапçутă, кăвак пĕлĕт тăптăр. Шапшурă йур йалтăр, йалтăр курăнаť. Хĕр ури айĕнђе йур шатăртатса пыраť. Пĕр хăрамасăр ку хĕр шыв хĕрне анђĕ. Ак, тамаша! Пĕтĕм çўçпуç хĕррĕн вирелле тăђĕ, шăмшак çўçенсе кайрĕ: хăрушă тухатмăшшем çак хĕре кĕр сăрса илђĕç. Хăраниппе ку хĕр ним тума та пĕлмест. Хытса кайнă шур йур пек шурă тăраť. Тухатмăшшем тискерĕн уласа йарса, хĕре

тытма аллисене ҫасрӗҫ. Хайхи хӗр ҫунхавалӗпе тухатмӑшшенҫен тарма тытӑнҫӗ. Тухатмӑшшем ун хыҫҫӑн ҫупма пуҫларӗҫ. Хайсем хӗре йарса илес тесе, аллисене ҫасса, пӳрнисене тармакласа ҫупаҫҫӗ. Хӗр те ҫупат, тухатмӑшшем те унтан йулмаҫҫӗ. Ак халҫ ҫитсе, хӗре йарса илсе, турткаласа, ҫуркаласа пӑрахӗҫ. Хӗр ҫунӗ пит хӑранипе пӳрне вӗҫне тӑрса йулҫӗ. Ак тухатмӑшшем ҫитсе, ҫитсе пыҫӗҫ, хӗре халҫ йарса илеҫҫӗ. Хӗр ҫари ҫухӑрса йаҫӗ те, ҫавӑнтах витри мӗнӗпех ҫӳлелле вӑшт ҫеҫ уйӑх ҫине улӑхса кайрӗ. Уйӑх тата ҫутӑрах пулса кайса, ҫак хӗре хӑй патне туртса илҫӗ. Тухатмӑшшем пӑхкала йулҫӗҫ.

— Ах, шӑлӑмӑрсене хӑйраса килнӗҫҫӗ, тытса ҫисе пулмарӗҫ. ку хӗре! тесе уласа йаҫӗҫ. Хӑйсем вара пӗр куҫ хупса илиҫҫен тылллисем ҫине ларҫӗҫ те, сӑртсем урлӑ, вӑрман урлӑ тыллисемпе сиктерҫӗҫ.

Ҫак хӗре амаҫури тарӑхтарнине уйӑх пӗлсе тӑнӑ, амаҫури ҫав хӗре

асаплантарнине уйăх каçни кун çÿреçерен курса тăнă. Мĕскĕн хĕре уйăх пит хĕрхеннĕ. Çавăнпа вăл —ку таса çун тухатмăшшем аллине ан лектĕр тесе,—хăй патне улăхтарнă. Çавăнтан кайран халĕ те çав хĕр мĕлки витри мĕнĕпех уйăх çинçе курăнса тăрат, теççĕ ваттисем.

---

## Вилме кайакан пуйса килнĕ, пуйма кайакан вилсе килнĕ.

Пĕр çухăн çыннăн арăмĕ вилнĕ. Çав арăмран унăн пĕр 7 çулхи пит çипер мар, хăрах куçлă, шатра питлĕ, çăлах ывăл аçа йулнă. Тăван амăшĕ пур çухне çак аçанăн пурăнăçĕ аван пулнă. Аçи хăй çипер мар пулин те, амăшĕ ăна хĕрхенсе йуратса усранă. Амăшĕ тепĕре авлансан çак мĕскĕн аçана амаçури пит хĕсĕрленĕ. Амаçурийĕн хăйĕн 7 çулхи ывăлĕ пулнă. Вăл ăна çеç пăхнă. Упăшки ывăлне çăкăр та памав. Пĕрре çак амаçури аçа ашшĕ-

не калаť: пирĕн çăкăр хамăра çиме те сахал. Хăвăн хăрушă аҫуна кирек ăçта кайса йар, кайса йамасассăн, кĕçĕрех пăвса вĕлеретĕп, тет. Ашшĕ куҙҙана куҙҙана, лаша кӳлҫĕ те, аҫине урапа çине лартса, Атăл леш йенне кайрĕ. Атăл урлă каçса, сĕм вăрмана макра макра аҫине йарса хăварҫĕ. Хăй тĕттĕм пулаҫҫен Атăл урлă каçса кăйрĕ.

Аҫа ашшĕнҫен йулсан, вăрманта макăрса çӳрекелерĕ çӳрекелерĕ те, Атăл хĕрне анҫĕ. Улăхра унта кунта утă капанĕсем лараççĕ. Çак аҫа пĕр капан патне пыҫĕ те, ун тăрне улăхса выртрĕ. Тĕттĕм пулса килет. Улăхра никам та çук. Ку аҫа утă капанĕ тăрăнҫе пĕҫҫенех выртаť. Пăҫ тĕттĕм пулҫĕ. Куçран тĕртсен те куç курмасť. Çурçĕр тĕлĕнҫе уйăх хăпарҫĕ те, кăшт çутатрĕ. Лăп çурçĕр çитсен, Атăлтан шывриссем тухрĕç. Хăйсем пăхма хăрушă: каҫака пек мăйракаллă, сухаллă; вутлă куçĕсене унталла кунталла

выҫҫатаҫҫӗ, сӑмсисемпе нӑш, нӑш шӑршлаҫҫӗ.

— Ха, кунта ҫын шӑрши кӗрет! терӗҫ те, капан йӗри тавра кускала пуҫларӗҫ.. Унҫен те пулмин мӑйракисемпе капана йӑвантарас тесе, тӑрслаттарма тытӑнҫӗҫ. Кайалла кайалла ҫакаҫҫӗ те, ҫупса пырса капана пӗтӗм вӑйран сӗкеҫҫӗ. Капанӗ хаҫ йӑванса кайас пек силленсе ҫеҫ ларать. Мӗскӗн аҫа пит хӑранипе ҫунпе ҫунсӑр пулса ларать, хӑй ҫапах: пӗр мӑйраки кӗмӗл, тепӗри ылттӑн! тесе йурлать.

Хай леш шыврисем ҫак аҫа йурланине илтсен, мӑйракисене шӑкӑрт капан кутне пӑрахса хӑварҫӗҫ. Атӑл леш йенҫе автан алтса йаҫӗ те, леш шыврисем пур те шыва сикрӗҫ.

Тул ҫутӑлсан, ку аҫа капан тӑрринҫен анҫӗ те, пӑхать: капан кутӗнҫе ылттӑн, кӗмӗл мӑйракасем ҫутӑлса выртаҫҫӗ. Ҫак аҫа ҫав ылттӑн кӗмӗл мӑйракасене пӗр аркӑ пуҫтарҫӗ те, килне кайрӗ.. Килте ама-

çури çак аҫана пӗтнӗ, вилнӗ тесе, йе ӑна кашкӑр çисе йаҫӗ пулӗ тесе, асӑнса ӑшӑ икерҫӗ пӗçерет. Амаçурипе ашшӗ, тата амаçури ывӑлӗ пур те пӗрле икерҫӗ çисе ларнӑ ҫух, çак вилнӗ тенӗ аҫа пыҫӗ кӗҫӗ. Ылтӑн кӗмӗл мӑйракасене ашшӗне паҫӗ. Ашшӗ те ывӑлӗ таврӑннӑшӑн, те ылттӑн кӗмӗл мӑйрака илсе килнӗшӗн, пит хӗпӗртенӗ.

Амаçури тепӗр кун хӑй ывӑлне йараштӑн.

— Кайса леçха манӑн аҫана та. Вӑл та ылттӑн кӗмӗл мӑйракасем кайса туптӑр. Санӑн ҫӑлах ҫипер мар ывӑлу пуйса килҫӗ, манӑн та кайса пуйтӑрха, тет.

Упӑшки лаша кӳлет те, амаçури ывӑлне сӗм вӑрмана кайса йарат, хӑй ҫасрах, тӗттӗм пулиҫҫен, Атӑл урлӑ каççа киле кайат. Амаçури ывӑлӗ вӑрманта çӳрерӗ те, тӗттӗм пуласпа Атӑл улӑхне анҫӗ. Тӗттӗм пулсан, утӑ капанӗ çине улӑхса выртрӗ те, хӑççан Атӑлтан шыври-

сем тухӗҫшя тесе кӗтсе выртаҫ. Хайхи шыврисем, ҫурҫӗр ҫитсен, Атӑлтан тухрӗҫ те, нӑш нӑш шӑршласа ҫӳреме пуҫларӗҫ. Ку аҫа хӑрушӑ шыврисене курсанах, пит хӑраса ӳксе ҫухӑрса йаҫӗ: Ан килӗр кунта, шыврисем! сирӗн мӑйракусем мана кирлӗ мар! Сирӗн мӑйракусем пӗри тӑм, тепри тимӗр! тет.

Шыврисем тӳрех капан патне пыҫӗҫ те, калаҫҫӗ: ха, кунта пӗр усал ҫын ҫӗппи пире хурласа лараҫҫке. Аҫӑр ӑна вӗлерер! теҫҫӗ. Ҫапла каласан, капана мӑйракисемпе тӑрсланттара пуҫларӗҫ. Хай аҫан хӑранипе ҫӗри хӑпнӑ. Хӑй ҫапах шыврисене: кайӑр кунтан, усалтӗселсем! сирӗн мӑйраку тавраш кирлӗ мар мана! тесе вӑрҫаҫ. Лешшем хытӑран хытӑ капана йӑвантарса йаҫӗҫ. Ҫиленсе ҫитнӗскерсем аҫана пӗр куҫ уҫҫа хупиҫҫен ҫисе йаҫӗҫ. Атӑл леш айӑккинҫе автан авӑтрӗ те, шыврисем пур те шыва ҫӑмрӗҫ.

Тул çутăлсан амăшĕ ывăлне пуйса килет тесе кĕтет. Атăл хĕрнелле пăхать пăхать, кĕтет кĕтет ывăлне— ывăлĕ килни курăнмасть. Айакранах ҫĕр утă капанĕ йăванса выртни курăнать. Ку арăм лашине çав капан патнелле уттарҫĕ. Патне çитсен пăхать, аҫин çуркаласа пăрахнă кĕпейĕмĕ пур та, тата тăлаçăпатисем выртkаласа çўреççĕ. Пĕтнĕ аҫа. Пуйма кайан вилсе килнĕ тени çавă ĕнтĕ вăл.

---

## Ухмахсем.

Ухмах пирĕн ĕмĕре çитет,
терĕ тет пĕр ватă çын.

I.

Пĕр çын авлансан тĕпĕр кунах хăнавĕрлĕ пухма шухăшланă. Хăй ĕçкĕçикĕ валли йапаласем илме пасара кайать, çĕнĕ арăмне хăнасем валли мĕнле мĕнле апатсем хатĕрлемеллине каласа хăварать:

— Аш кукли ту. Кукли пăхма та, çиме те пит аван пултăр. Кукăль

хĕррине кантăраллă пек картлă хĕрĕллĕ ту. Вара хур пăтти пĕçер, пăрттан ăшала, тет.

Çĕнĕçын хăйнă хăйман тĕпелте ларат.

— Йурĕ, кукăљ хĕррине кантраллă тăвăп, тесе йулџĕ упăшкинџен.

Упăшки пасара тухса кайсанах, ку çĕнĕçын, ним ĕçе тытăниџџен, кукăљ хĕррине тытма кантра йава туçларĕ. Кантра йавса пĕтерлĕ пĕтĕрмен, çынсем пасартан тавăрăна пуçларĕç. Ку çĕнĕçын вутне те хутманха. Хăпăл хапăл вут хутса йарат те, кукăљ тума тытăнат. Упăшки пасартан перее те çитрĕ. Пăхат — апатсем пиçмен, арăмĕ вутне те тин хутса йанă.

— Арăм, есĕ пайан вут хутса апат пĕçерменимĕн? тет.

— Пĕçерейменрĕм çав. Халљ çеç кукăљ хĕррине тытма кантра йавса пĕтертĕм, тет арăмĕ.

— Мĕнле апла кукăљ хĕррине кантра тытатăн есĕ? Епĕ сана кукăљ

хӗррине кантра йавса тыт тесе каламарӑмҫке. Кукӑлҫ хӗррине ҫустаранах кантраллӑ пек тӗрӗллӗ тӑваҫҫӗ ӑна, тет.

Упӑшки пӑхат—арӑмӗ ҫӑнах та кукӑлҫ хӗррине мунҫаларан йавнӑ кантра ҫыпӑҫтарса лартнӑ.

— Ку манӑн арӑм аван тӑнлӑпуҫлӑ ҫын пулмарӗ пулӗ, ухмахӗҫке ку манӑн арӑм, тесе хуйхӑра пуҫларӗ ҫӗнӗҫын упӑшки. Каҫҫен хуйхӑрса ларҫӗ ларҫӗ те, арӑмне калат:

— Сывӑ пул, арӑм. Манӑн санпала, ухмахпа, йепле ӗмӗр пурӑнса иртерес? Тухса кайамха епӗ ҫутӑ тӗнҫе тӑрӑх ҫӳреме. Виҫӗ кун хушшинҫе виҫӗ ҫӗрте сан пек виҫӗ ухмах тӗл пулсан, епӗ киле тавӑрӑнӑп. Виҫӗ кун хушшинҫе виҫӗ ухмах тӗл пулмасан,—ан кӗт вара мана, епӗ киле килместӗп, терӗ ҫӗнӗҫын упӑшки. Ҫапла каларӗ те, тухса кайрӗ ҫут тӗнҫе тӑрӑх ухмах шырама.

II.

Пыраҫ, пыраҫ ку ҫын, тӗттӗм пуласпа пӗр йала ҫитрӗ. Йалта пӗр килте сысна вилес пек ҫухраҫ. Мӗн пулнӑши ку сыснана тесе, ҫак ҫын сысна ҫухракан киле кӗрет. Пӑхаҫ—лупас айӗнҫе виҫӗтӑватӑ ҫын пуҫтарӑннӑ та, сыснана ҫӑхсем ларакан кашта ҫине улӑхтарса лартасшӑн тӑраҫҫӗ. Виҫҫӗн тӑваттӑн сыснана кашта ҫине ҫӗклесе улӑхтарҫӗҫ те: лар ӗнтӗ ан ӳк! ҫӑхсем лараҫҫӗҫке, есӗ, сысна, ҫав кашта ҫине лараймастӑни вара? теҫҫӗ. Сысна ҫӑх каштӑ ҫинҫен ҫул пек лап персе анҫӗ. Хӑй вилес пек кӑрлатса ҫухӑраҫ.

Ҫӗнӗҫын упӑшки ҫак ҫынсем патне ҫывӑхарах пыҫӗ те: мӗн тӑватӑрха есӗр? тесе ыйтрӗ.

Сыснана кашта ҫине лартакан ҫынсем калаҫҫӗ.

— Пайан пасартан сысна илсе килнӗ те, сыснана кашта ҫине ларма вӗрентетпӗр. Каҫ пулнӑ, ҫӑхсем тахҫанах кашта ҫине ларнӑ, сысна

лармасть, теççĕ. Хăйсем каллех сыснана тепĕр хут кашта çине улăхтарса пăхма хатĕрленеççĕ.

— Ах, ухмахсем, есĕр терĕ ку çĕнĕçын упăшки—сысна кашта çине лармасть вăл. Ăна есĕр çĕр çине улăм нумайтарах пăрахса парăр та, ним кашти те кирлĕ мар: сысна улăм ăшне кĕрсе выртма йуратать, терĕ.

Сысна хуçи сысна патне улăм пĕр çĕклем пырса пăрахрĕ те, сысни ҫинерех улăм ăшне кĕрсе ҫакаланса выртрĕ.

— Х-ха, ҫăнахтаçке, сысна улăма йуратать. Епĕр кашта çине лараканкайăк пулĕ ку сысна тесе шухăшлана, теççĕ сысна на асаплантаракансем

Акă пĕр йалта ухмахсем палăрҫĕçха. Çĕнĕçын упăшки ҫунĕ кăшт лăпланнă пек туйăнҫĕ. Çав ухмахсем патĕнҫех çĕр сывăрҫĕ.

III.

Тепĕр ирхине çĕнĕçын упăшки тăҫĕ те, каллех ухмах шырама малалла утрĕ. Пырать, пырать пĕр йала

çитрĕ. Йал урамĕ тăрăх утрĕ. Пăхаҫ — пĕр килтен ҫынсем шăналăксемпе, михсемпе урама ҫупса тухаҫҫĕ те, шăналăксене, миххисене урама силлеҫҫĕ. Ухмахсене шыракан ҫын ҫак вĕшĕлтетсе ҫӳрекен ҫынсене пăхса тăҫĕ тăҫĕ те, хăй ăшĕнҫе шухăшлаҫ:

— Мĕн тăваҫҫĕши ку ҫынсем? тет. Патнерех пыҫĕ те, ҫав ҫынсенҫен ыйтаҫ:

— Мĕн ĕҫлеттĕр есĕр? тет.

Лешшем: вут хутнăтаха, пӳртрен тĕтĕм кăларатпăр, теҫҫĕ.

Ку ухмахсене шыракан ҫын ҫак ҫынсем килне кĕҫĕ те, тĕлĕнсе хытсах кайрĕ. Хура пӳрте вут хутнă, пӳрт алăкне ҫат хупса лартнă, пӳртĕнҫе ҫăпҫăра тĕтĕм лăп тулли. Кил хуҫи аҫипăҫи мĕнĕпе пӳртрен тĕтĕме, куркасемпе, витресемпе ăса ăса, шăналăксем, михсем ҫине тултарма тăрăшаҫҫĕ, вара шăналăксене, михсене урама йăтса тухаҫҫĕ.

Ҫĕнĕҫын упăшки пăхса тăҫĕ, те калаҫ:

— Есӗр тӗтӗме шӑналӑкпа, михпе йӑтса пӗтерес ҫук. Алӑка уҫҫа йарӑр та вӑл хӑйех тухса кайаҭ, тет.

Лешшем алӑка уҫҫа пӑрахаҫҫӗ те, тӗтӗм ҭӑнах та, ҫӳлелле ҫӗкленсе йарӑмланса, алӑкран тухса кайа пуҫларӗ.

— Х-ха, ҭӑнах та тӗтӗм хӑйех алӑкран тухаҭҫке вӑл. Тавтапуҫ сана ырӑ ҫын, пире алӑк уҫҫа тӗтӗм кӑларма вӗрентнӗшӗн. Епӗр куллен кун вут хутмассерен тӗтӗме шӑналӑксемпе михсемпе кӑларса тӑнтан кайнӑ, тет кил хуҫи.

Икӗ тӗлте ухмахсем тупӑнҭӗҫха.

## IV.

Ҫӗнӗҫын упӑшки тепӗр кун тата тепӗр йалалла утрӗ. Йала ҫитсен, йалта урамра пура пуракансене тӗл пулҭӗ. Платниксем пур те пӗр ҫӗре пухӑннӑ та, пӗр пӗренене ӗрлесе, кӑшкӑрса таккаса тӑраҫҫӗ. Ку ҫын патнерех пыҭӗ те, пӑхса тӑраҭ. Платниксем пӗр пӗренене икӗ пуҫӗнҭен вӗренпе ҫыхнӑ та, икӗ йенелле пӗ-

тӗм вӑйран, йӑванса кайас пек, туртаҫҫӗ. Варринҫен пӗренене пилӗкӗн-уләттӑн пуртӑсемпе шаккаса тӑраҫҫӗ. Туртакансем шаккакансене: шаккӑр, перӗр авантарах, хаҫ ҫӑсӑлать, тесе ҫухӑраҫҫӗ. Шаккакансем туртакансене: туртӑр, туртӑр, хытӑрах! пӗтӗм вӑйран туртӑр, тӑсӑлҫӗ пӑртак, тата туртӑр, тата тӑсӑлать! тесе ӗрлеҫҫӗ.

Ухмах шыракан ҫын пӑхса тӑҫӗ, тӑҫӗ те: мӗн тӑваттӑр есӗр? тесе ыйтрӗ.

Платниксем калаҫҫӗ: пӗрене кӗске пулнӑ та ха, тӑсатпӑр, теҫҫӗ.

Ухмах шыракан ҫын калать:

Есӗр пӗренене апла тӑсаймастӑр, пӗрене кӗске пулсан, ӑна сыпас пулать, терӗ те, мӗлле сыпмаллине кӑтартса туса хӑварҫӗ.

Виҫӗ кун ҫӳренӗ ҫӗнӗҫын упӑшки виҫӗ йалта ухмахсем тӗл пулҫӗ те, килнелле утрӗ.

— Манӑн арӑм ҫеҫ ухмах мар иккен ҫӗр ҫинҫе ухмах тата нумай. Ухмах пирӗн ӗмӗре ҫитет, тесе ахаль

каламан çав, тесе шухăшласа çĕнĕçын упăшки килелле утаҭ.

## Тӳнине шыракансем.

Пĕр пӳртре карҙăкпа унăн çитĕннĕ хĕрĕ пурăннă. Çулла çынсем хĕрсе тырă выраççĕ, ку амăшĕпе хĕрĕ, хире тырă вырма пĕрре те тухмаççĕ.

Карҙăкĕ калаҭ: епĕ вилес карҙăк, кăçал вилсен, епĕ тырă вырни ахалех харама йулаҭ. Çавăнпа манăн тырă вырма тухас мар, пуҙ.

Хĕрĕ калаҭ: Епĕ çитĕннĕ, каҙҙа кайас хĕр, мĕн тăвас манăн тырă вырса? Тĕрĕ тытаҭ те, сулхăнта тĕрĕ тĕрлесе, йурласа лараҭ. Амăшĕ çăм арлаҭ. Çынсем мĕн пур ĕçлеме пултараканни пур те хирте шăрăхпа пиççе ĕçлеççĕ. Ку карҙăкпа хĕре килте сулхăнта ларма пит аван.

Çынсем тырă вырса хиртен пуçтарса кĕҙĕç, авăн çапаççĕ. Кĕркунне пулса килет, çынсем мĕн пур

ӗҫне пӗтӗмпе туса пӗтерҫӗҫ, тырри-пуллине кӗлет тулли тултара тул-тара хунӑ. Сӑра туса ӗҫкӗҫикӗре ҫӗмӗрӗлеҫҫӗ. Хура кӗр ҫитрӗ. Пу-шанса йулнӑ хирте карҫӑпа хӗр тырри пӗр пӗҫҫен тӑлӑххӑн курӑ-наҭ. Йур та ҫӑва пуҫларӗ. Вилес карҫӑк вилеймерӗ, каҫҫа кайас хӗр кайаймарӗ. Иккӗшӗ те пӗрле шӗ-кӗрех пурӑнаҫҫӗ. Ҫимелли пӗтрӗ. Мӗн тӑвас? Хиртен тырра кӗрт хӳ-се кайнӑ. Выҫӑ ларас килмест. Амӑ-шӗпе хӗрӗ тырӑ вырма кайаҫҫӗ. Кӗрӗксӑхман тӑхӑнҫӗҫ. Пӗри йур хырма кӗреҫе илҫӗ, тепри ҫурла илҫӗ, кайрӗҫ тырӑ вырма. Килӗнҫен тухсанах ку тырӑ вырма кайакан сене кӳршӗ арҫӑнни курҫӗ те, ыйтаҭ:

— Есӗр ӑҫталла кайатӑр капла?

— Тырӑ вырма кайатпӑр, теҫҫӗ лешшем.

— Хӗлле ӗнтӗ, мӗлле тырӑ вы-ратӑр? Пӗтрӗ ӗнтӗ вӑл тырӑ выраcси. Аҭӑр сире пашалу туса пурӑнмал-хӑл урпа парса йарам, терӗ те, кӳр-

шӗ ҫынни карҫӑкпа хӗре хӑй патне йертсе кӗҫӗ. Кӗлетне уҫҫа карҫӑкпа хӗр валли калама ҫук аван, таса шултра урпа тӑватӑ мих тултарса хуҫӗ. Хӗр урпана ывӑҫласа илҫӗ те, пӑхать: Тӳнӗши ку урпана? тет.

Кӳршӗ калать: тӳмен, есӗр тӳнине шырама тухнӑи? Сире тӳни кирлӗ пулсан, есӗр тӳнине кайса шырӑр, терӗ те, кӗлетне шалт питӗрсе хуҫӗ. Карҫӑкпа хӗр пӑхкала йулҫӗҫ. Кӗреҫепе ҫурлине йатса хӑйсен ани ҫине тырӑ вырма лапсӑртатрӗҫ.

---

## Икерҫӗ ҫунӑ кун.

Пӗр старикӗн карҫӑкӗ ватӑлнӑ майӗпе йатлаҫакан пулса кайнӑ. Кӑмака ҫинҫе ларнӑ ҫухнех, мӑкӑртатса ларать. Старике кирлӗ, кирлӗ мар ҫухнех йатлаҫать. Старик ӑна ҫавӑншӑн пӗрре хӗвесҫӗха манӑн ку карҫӑка тесе шухӑшлать: вара лӑркама ҫарӑнӑҫҫӗ, тет. Анҫах старик йалйыша карҫӑкне хӗневине кӗлтерешшӗн мар. Мӗнле те пулин

ҫийелле кăшт та пулин карҫăка-ларкапа хĕнештĕн. Мĕнле ҫийерех тăвас ҫак ĕҫе? тесе старик кунĕн-ҫĕрĕн шухăшлаҭ. Шухăшласан шухăшласан, ăс тупрĕ, старик ҫийе-ленҫĕ.

Пĕр ирхине старик карҫăкне калаҭ: Карҫăк, икерҫĕ пĕҫерха, тет.

Карҫăк йатлаҫа йатлаҫа икерҫĕ пĕҫерҫĕ. Старик пĕҫернĕ икерҫе пĕрне те ҫимерĕ, карҫăкĕнҫен вăрттăн хутаҫ ҫине ҫиксе хуҫĕ те, тепĕр ирхине ирех карҫăкĕ тăриҫҫен икерҫе илсе вăрмана вĕҫтерҫĕ. Вăрманта икерҫĕсене ҫул хĕрринҫи йăвăҫҫен тураҫĕсем ҫине тире тире хуҫĕ, тата виҫĕ-тăвата икерҫĕ вăрманти сукмак ҫине пăрахкаласа тухрĕ. Вара таппа пырса кĕнĕ мулкаҫа тытрĕ те, ҫырмари пулă шакĕ ăшне кайса ҫикрĕ. Шакри пулла илсе мулкаҫă таппи ҫине пырса ҫикрĕ. Йураҭ, пит аван: сăртра тип ҫĕртех мулкаҫă таппине пулă пырса кĕнĕ, ҫырмара, шыв ăшĕнҫе пулă

шаккине мулкађă пырса лекнĕ. Тĕлĕнмелле йапала!

Ҫак ĕҫҫене туса пĕтерсен старик киле ђупрĕ. Карђăкĕ кăмака ҫинђен тин анаĭ. Те шăмшак ыратнипе, те хăй текех йатлаҫас йĕркипе, карђăк лăрка лăрка кăмака ҫинђен анаĭ Старикне пĕрре-иккĕ йатласа та илђĕ.

Старик калаĭ: Ан йатлаҫ, карђăк. Аĭаха вăрмана, кăшт уҫăлса ҫӳрер, кунĕ пит аван. Сапсар хĕвел пăхаĭ, ăшă, карђăксене ҫӳремелли кун. Пĕрер пурак илер. Кăмпасем шыракалар, мăйăр татар, аĭа... тет

Карђăкĕ мăкăртатсах вăрмана каймa пуҫтарĕнђĕ. Пурак ҫакса карђăкпа старик вăрманалла утрĕҫ.

Вăрмана ҫитрĕҫ. Карђăк пăхаĭ— тĕлĕнсе хытса кайрĕ: йăвăҫ турађĕсем ҫинђе икерђĕсем тирĕнсе тăраҫҫĕ, ҫĕртре те унĭа кунта икерђĕсем выртаҫҫĕ.

— Ара, старик, ку мĕнле йапала? Йăвăҫҫем ҫинђе, сукмак ҫинђе икерђĕсем пур?

— Пайан икерҫӗ ҫунӑ кун, тет старик. Хӑй пӗр икерҫӗне йӑвӑҫ ҫинҫен илҫӗ те, ҫиме пуҫларӗ. Карҫӑк та старике курмалӑх икерҫӗ ҫисе пӑхрӗ. Икерҫӗ пит тутлӑ, пит аван.

— Х-ха́, старик, мӗнле ырӑ турӑ панӑ ку икерҫӗ ҫӑмрине, тет карҫӑк, хӑй икерҫӗсене пурак ӑшне вырӑнаҫтарса хурат. Икерҫӗсене пуҫтарса пӗтерсен, старик карҫӑка мулкаҫӑ таппи патне йертсе пыҫӗ. Пӑхаҫҫӗ—мулкаҫӑ таппи ӑшӗнҫе пӗр пысӑк шапшурӑ пулӑ вырта парат.

Ара, старик, ку мӗлле йапала? Мулкаҫӑ таппине типӗ ҫӗртех пулӑ пырса кӗнӗ, тет карҫӑк.

— Пайан икерҫӗ ҫунӑ кун. Икерҫӗ ҫунӑ кун пулӑ та мулкаҫӑ таппине типӗ ҫӗртрех пырса кӗме пултарат, тет лешӗ.

Ҫӳресен, ҫӳресен карҫӑкпа старикӗн шыв ӗҫес килнӗ. Вӗсем ҫырмана анҫӗҫ. Пӑхаҫҫӗ—шывра пулӑ шакӗ ӗшӗнҫе мулкаҫӗ пур. Карҫӑк каллех тӗлӗнсе калат.

— Пăхха, старик. Пит тĕлĕнмелле йапала: пулă шакĕ ăшне мулкаҫă кĕрсе выртнă! тет.

— Икерҫĕ ҫунă кун ҫавăн пек тĕлĕнмелле йапалласем пулаҫҫĕ. Икерҫĕ ҫунă кун мăкăрҫăк—ларка карҫăксене те старикки сем хĕнеҫҫĕ терĕ старик. Хăй йĕплĕ шăлан хулли хуҫат. Карҫăкĕ старик сăмаххисене аванах илтмен пек пулса:

— Мĕн, мĕн терĕн есĕ, старик? тет Хăй: мĕн хăтланат ку манăн старик? тесе шухăшлат.

— Икерҫĕ ҫунă кун мăкăрҫăк—лăрка карҫăксене старикки сем хĕнеҫҫĕ терĕм епĕ. Акă епĕ те сана пайан хĕнес тетĕп, куҫнапуҫна сыхла карҫăк терĕ те, старик карҫăка шăлан хуллипе йăввăк, йăввăк тутарса та илҫĕ. Хăй килелле вĕҫрĕ. Карҫăкĕ пăхкала йулҫĕ. Усалланса, хайарланса старикне йатлаҫа йатлаҫа килелле утрĕ.

Старик хăвăртрах киле тавăраннă та, кўршĕ хĕрарăмĕсене ҫĕнсе ҫўре-

нĕ. Килĕрха пирĕн пата. Манăн карҫăка вăрмантах темĕн пулҫĕ: ухмаха йĕрсе кайрĕ. Те арçури çыпăçрĕ, те урăх инкек пулҫĕ: мана пĕрмай шăлан хуллипе хĕнерĕн тесе вăрçаť, тет старик, хăй вăрттăн лăш кулаť.

Карҫăкĕ вăрмантан çитрĕ. Пўрте кĕнĕ кĕмен стариккине йатлаçаť.

— Ах пуťсер етем. Ватăлмалăх кунта мана хĕнерĕ. Шăлан хуллипе çаптарҫĕ... тет.

Старик хирĕç тухма хăтланса. Карҫăк, мĕн пулнă вара сана. Епĕ сана хăççан тиврĕм, пĕрре те çапман, тет.

— Ан ĕненĕр старик сăмахне, тет карҫăк.—Çырма хĕрринҫе шăлан хулли хуçça илҫĕ те, хĕнерĕ, тет.

— Никçан та, ырă çынсем, епĕ хамăн карҫăка кун ҫул пурăнса алăпа сĕрсе курман. Темĕн пулнă пайан манăн карҫăка. Никçан улталаманнине улталаť, тет старик.

— Ах, старик, йепле улталатăп, тет карҫăкки тарăхнă сасăпа.—Есĕ

хӑвах каларӑнҫке: икерђӗ ҫунӑ кун стариксем карђӑккисене хӗнеҫҫӗ, тесе. Хӗнерӗн ҫав йал кулли, аҫа ҫапапшӗ! тет. Кӳршӗ хӗрарӑмӗсене калат: Пайан вӑрманта икерђӗ ҫунӑ: йӑвӑҫҫем ҫинђе те, сукмак ҫинђе те икерђӗсем выртаҫҫӗ. Тата сӑртра типӗ ҫӗртрех мулкађӑ таппине пулӑ пырса кӗнӗ, ҫырмара, шывра пулӑ шакне мулкађӑ пырса лекнӗ. Старик мана, пайан икерђӗ ҫунӑ кун, пайан мулкађӑ та пулӑ шакне пырса лекет, пулӑ та типпе тухса сӑрта лартнӑ мулкађӑ тап ӑшне пырса кӗрет. Икерђӗ ҫунӑ кун йаланах ҫапла пулат, икерђӗ ҫунӑ кун стариксем та карђӑккине хӗнеҫҫӗ тесе мана хӗнерӗ тет. Карђӑк йӗрех пуҫларӗ. Кӳршӗ хӗрарӑмӗсем калаҫҫӗ:

Ара Праски аппа, есӗ никҫан ҫын курман, илтмен йапаласем ҫинђен калатӑн. Сана вӑрманта арҫури аташтарнӑ пулђ. Сана пӑрахасси*)

---

*) Пӑрахасси тени ҫӑкӑрпа арҫурине ђирлӗ ҫын патӗнђен илӗртсе кӑларса йани. Ҫӑкӑр турамне вара арҫури ҫыпӑҫнӑ ҫӗре кайса пӑрахаҫҫӗ.

лекнĕ. Есĕ аташатăн, тесе ĕненмерĕç кӳршĕ хĕрарăмсем карђăк сăмахне. Старик лăш кулаť.

---

## Хăрăк хурăн.

Пĕр хĕр çитĕнсе пыраť, анђах пир тĕртме вĕренеймест: амаçури вĕрентмест. Амаçури шухăшлаť: ку хĕр пир тĕртме ан вĕренейтĕр, йалта шутлă хĕр ан пултăр, тет. Амаçури хĕрне пиррине кăнтарнă кумнă ђухне йăнăш туса параť те, вара хĕрĕ темĕн ђухлĕ тăрăшша тĕртсен те, пирри пĕрре те аван пулмасť.

Пĕр çуркунне çĕршыв типсен, амаçури хĕрне калаť: Кайса сут хăвăн пиррӳне пасара. Пиррӳ санăн нимĕн çĕлеме те йурас çук: пит нађар, мĕн çӳпçене ђиксе вырăн йышăнтарасси пур, тет.

Хĕр пиррине хутаç çине ђикет те, пасара илсе кайаť. Пасарта ку хĕрĕн пирне илекен никам та çук. Пасар саланиђђенех тăрса та, хĕр пиррине пĕр аршăн та сутаймарĕ.

Килелле таварнат. Ман çул çинҫе йап хурансем илемленсе лараççе. Йемйешел тураҫесем йараман, йараман усанса ăша çилпе хумханса тăраççе. Çак хер хурансем айне ларҫе те, шухăша кайре:

Мен тавас ку манан наҫар пирпеле? Пасарта та манан пире никам илекен пулмаре. Киле илсе таварансан, амаçури мана: пире сутайман тесе, мăшкăлат, йатлаçат. Ака пер харак хуран çуркунне пулна пулин те çапçара, хурлахла ларат. Çак хуранан ҫер илеме те çук, епе ăна çак пирпе ҫаркаса хăварам, тере те, хер хайен мен пур пиррине хуран йериттавра авраса хăварҫе.

Киле çитсен амаçури херенҫен ыйтат:

Сутрани йурахсар пиррупе! тет.

— Сутрам, тет хере.

— Кам ухмах илҫе санан пиррупе?

— Ман çул çинҫи харак çара хуран, тет хере.

— Хурӑн йепле пир иле пӗлет вӑл, ухмах хӗр, ан сӳткелен, кайса ил хӑвӑртрах пиррӳне! тесе амаҫури йатлаҫаҭ.

— Кай, кай! кайса ил хӑвӑртрах! тесе хӗре алӑкран тӗртсех кӑларса йаҭҫӗ.

Каҫ пулса килет. Хӗр мӑн ҫул йенелле утрӗ. Мӑн ҫул патне ҫитсенех тӗттӗм пула пуҫларӗ. Хӗрӗн ҭун сӳлетет, тухатмӑшран, арҫурирен хӑраҭ, хӑй ҫапах та малалла утаҭ. Мӑн ҫул ҫине ҫитрӗ. Хурӑнсем ҫил ҫук майӗпе шӑпӑрт тӑраҫҫӗ, пӗр тураҭҫӗ те, пӗр ҫулҫи те сиккеленмест. Хӗр хӑрӑк хурӑн патне пиррине сӳсе илес тесе пыҭҫӗ. Пӑхаҭ, пирри ҫук. Хурӑн кутӗнҭе ҫутӑ курӑнса кайрӗ. Каҫхи тӗттӗмре йал, йал тӑваҭ. Хӗр кукленсе ларҭӗ те, ҫав ҫутӑ йапалана хуллен тытса пӑхрӗ. Хӑй шикленет: Мӗн ку? вут пулсан алла пӗҫермелле. Алӑ ҫине илсе пӑхрӗ те, тӗлӗнсе хытсах кайрӗ: Ылттӑн, пӗр купа ылттӑн хурӑн

кутӗнҫе ҫутӑлса выртаҭ. Хӗр ылтӑна тутӑрпа ҫыхаҭ те, ҫурӑм ҫине аран, аран хурса киле йӑтса каиаҭ. Киле ҫитсен, амӑшӗ хӗрне алӑк уҫса пӳрте те кӳртешшӗн мар, йатлаҫаҭ.

— Уҫ, анне, уҫ! тет хӗрӗ. Епӗ пире хӑрӑк хурӑна аван хакпах панӑ, пӗр тутӑр ылттӑн йӑтса килтӗм, тет.

Амаҫури: ку манӑн хӗр ухмаха йерне пулӗ, тесе выртаҭ. Хӑй ҫапах, хӗрӗ ылттӑн тесен, алӑкне тӑрса уҫрӗ. Хӗрӗ пӳрте кӗрсенех тутӑрти ылттӑна сӗтел ҫине ҫанкӑр тутарса тӑкрӗ. Амаҫурийӗн ылттӑна курсан куҫӗпуҫӗ ҫаларса кайрӗ: Ах, ылттӑн! ылттӑн! тет—Манӑн та хамӑн мӗн пур аван пирсене ыран ҫав хурӑн ҫине кайса аврас, пулӗ тет.

Тепӗр кун амаҫури хӑйӗн ҫӑн аван ҫинҫе пиррисене хутаҫпа тултараҭ те, хӑрӑк хурӑн ҫине кайса авраҭ. Амаҫури кунӗпе, ылттӑн ил-

се килсен мĕн мĕн туса йусанмалли çинĕен шухăшласа хĕпĕртесе лараĭ. Каç пулиĕĕенех амаçури мăн çул çине ылттăн пуçтарма ĕупрĕ. Хурăн патне çитрĕ, пăхаĭ — пирри çук. Хурăн кутне ылттăн купи пури тесе пĕшкĕнсе пăхаĭ, ылттăн çук—пĕр пĕĕĕк купа тислĕк (навус) пур. Амаçури ылттăна йĕритавра çавăрăнкаласа шыраĭ, нимĕн те çук. Пирри пĕтнĕшĕн хуйхăрса питĕ тĕттĕм пулиĕĕен киле çитес тесе, амаçури килелле утрĕ. Киле çитрĕ те, ним тума аптраса хĕрне йатлаçаĭ. Çиллине çавăрса йараймасăр хĕрне килĕнĕен хăваласа кăларса йаĕĕ. Тухса кай ман килтен. Çана пула епĕ хамăн ĕăн лайăх пирсене пĕтерсе хутăм. Хĕрĕ мĕн пур ылттăнне илсе амаçури патĕнĕен тухса кайрĕ. Хĕрĕ вара çав ылттăна кĕмĕлпе улăштарса тухйа, алма, шўлкĕме çакнă. Тĕрлĕ пурçăн кĕпесем, кăвак пуставран хассем çĕлетсе пит

муллӑ хӗр пулса тӑнӑ. Ырӑ çынна катја кайнӑ та, халӗ те аван пурӑнат̆. Кӗвӗç ђунлӑ амаçури хӑй пирӑварне пӗтернӗшӗн халӗ те кулђанат̆.

**Респуплĕкри Ҫăваш Кĕнеки Кăларакан Уйрăмĕн Шупашкарта Аҫапăҫа Кĕнекисем ҫăвашла тухрĕҫĕ.**

1. Кайăкҫа Йемел — М. Сибиряка.
2. Макар телĕкĕ — Короленко
3. Кăвак Мăй — М. Сибиряка
   Шăпҫăк пурри — Андерсена.
4. Пĕҫĕк паттăрсем — М. П. Петрова.
   Ҫўревҫĕ шапа — В Гаршина.
5. Ҫеҫпĕл (3 пайлă халлап).
6. Хуйхă — Чехова.
   Пăрă Ваҫукĕ — его же.
7. Тăвата кун... — В. Гаршина.
8. Пĕр мужик пĕҫҫен икĕ кĕнерала тăрантарса усрани ҫинҫен — С. Щедрина.
   Ăслă ырăшпĕтри — его же.
9. Хăравҫă Паҫҫа | Хула тулашĕнҫе | Тĕттĕмлĕх пĕтерет — А. Чехова.
10. Упа ҫинҫен.
11. Шартлама Сивĕ — Короленко.
— Выҫлăх ҫулсем — Ҫĕкеҫ Ҫ.
13. Ҫăваш Йумахĕсем — М. Трубина пуҫтарнă.

---

С требованиями обращаться по адресу: гор. Чебоксары ЧАО. Госиздат.

---

Книжка набрана учениками школы Фабзавуча типографии Чувашгосиздата, под наблюдением метранпажа В. П. Кулькова.